## Ноябрĕн 14-мĕшĕ – Диабетпа кĕрешмелли пĕтĕм тĕнчери кун

# Мĕн-ха вăл диабет?

Сахăр диабечĕ – çын юнра сахăр ытларах пулнипе чирлени. Диабет пулни сирĕн организмра инсулин (пачах е кăштах) çитменнине пĕлтерет. Инсулин вăл – хырăмлăх айĕнчи железасен Р-клеткисем кăларса тăракан гормон. Вăл глюкозăна клеткăсене лекме, организма энерги парса тăма пулăшать. Кунсăр пуçне инсулин пӳре нумай сахăр кăларса пăрахассине чарса тăрать. Юнра глюкоза шайĕ ӳссе кайнин сăлтавĕсенчен пĕри – инсулин шайĕ çитменни. Юнра глюкоза шайĕ ӳссе кайнă май çакăн пек симптомсем палăраççĕ:

– хăвăрт ывăнни;
– ăш хыпни, çăвар типни;
– шăк нумай тухни;
– йывăрăш чакни, апат çиес килни;
– хушлăхра кĕçĕтни, ӳт çинчи япăх ӳт илекен сурансемпе инфекцисем.

Ытларах чухне икĕ тĕрлĕ диабет тĕл пулать: пĕрремĕшĕ – инсулинпа çыхăнни тата иккĕмĕшĕ – инсулинпа çыхăнманни.

**Пĕрремĕш ушкăна кĕрекен сахăр диабечĕпе** чирлесси организмра инсулин шайĕ çитменнинчен килет. Нумайрах чух 30 çула çитмен çынсем чирлеççĕ. Диабет симптомĕсем уççăн палăраççĕ, сывлăха хăвăрт хавшатаççĕ, уншăн хăрушлăх кăларса тăратаççĕ.

Ку чирпе чирлессин сăлтавĕсем ашшĕ-амăшĕнчен куçса пыракан чир паллисем, вируссем, аутоиммунлă чирсем пулма пултараççĕ. Ку чиртен сипленессипе чи малтанах диетăна пăхăнассине асăнмалла. Кунпа пĕрлех инсулин иньекцийĕсене йĕркеллĕ ирттерес пулать. Инсулин дозине эндокринолог кăна тĕрĕс палăртма пултарать. Инсулин иньекцине хăвăр тĕллĕн пăрахăçлани пулмалла мар! Çакă йывăр формăллă кетоацидоз пуçланасси патне илсе пыма пултарать. Çавна та манма кирлĕ мар. Ку чирсĕр пуçне урăх чирпе чирлени те диабетран сипленесси çине витĕм кӳме пултарать, инсулин дозине улăштармаллине пĕлтерет. Ку чухне вара медицина пулăшăвĕ кирлĕ.

**Иккĕмĕш ушкăна кĕрекен сахăр диабечĕпе** чирлесси ытларах тĕл пулать. Диабетпа аптăракансенчен 90 процентĕ унпа чирлет. Кун пек чухне организмра инсулин çитменни ытлах палăрмасть, çав вăхăтрах вара организм хăйĕнчи инсулин çине пĕр пек витĕм кӳреймест. Ытларах чухне 40 çул урлă каçнисем, пысăк йывăрăшлисем тата виçеллисем чирлеççĕ. Çемьери лару-тăру та витĕм кӳрет. Нумай пациентсем диабет симптомĕсене туймаççĕ. Ку вара диагностика ирттерме чарса тăрать.

Чиртен сипленнĕ чухне апатлану режимне çирĕп пăхăнас пулать, йывăр ĕçлесси те виçеллĕ пулмалла. Усси пулмасан организмри сахăр шайне чакаракан таблеткăсемпе е инсулин иньекцийĕпе усă курмалла. Самăртарах çынсен йывăрăша виçеллĕ чакарса пыни кирлĕ! Хăйсем тĕллĕн сахăр сахал препаратсемпе усă курассине пăрахăçласси, пĕр препаратсем вырăнне теприсемпе усă курма пуçласси пулмалла мар. Яланах врач-эндокринологпа канашламалла.

Кирек хăш формăллă диабета сипленĕ чухне те юнри глюкоза шайне нормăри виçере тытса тăрасси тĕп услови пулса тăрать. Çакă чир шала каяссине асăрхаттарать. Поликлиника условийĕсенче юнри сахăр шайне палăртнă чух глюкоза шайне апатланиччен тата çинĕ хыççăн 2 сехетрен палăртаççĕ. Пациентăн хăйне хăй тĕрĕслемелли хатĕр – глюкометр – пулсан, вăл юнри сахăр виçине ытти чухне те тĕрĕслеме пултарть.

Диабет компенсацийĕн степеньне палăртма ку чирпе чирлекенсен 3 уйăхра пĕрре венăри юнри гликированнăй гемоглобин шайне виçтермелле. Диабет чирне вăхăтра тупса палăртас тата чир шала каяссинчен асăрханас тесен вара çулленех куç тухтăрĕ, невропатолог, хирург патĕнче тĕрĕслевре пулмалла. Эсир тухтăрпа канашласа пĕр тĕллевлĕ сиплесен кăна диабет сирĕншĕн хăрушă пулмĕ.

**А. АЛЕКСЕЕВА,**
**районти тĕп больницăн врач-эндокринологĕ.**

## Тавар туянакансене пĕлме

# Пахалăхсăр эрех ан туянăр

Çĕршывăн тĕрлĕ регионĕсенче çынсем пахалăхсăр алкоголь продукцийĕпе наркăмăшланнă тĕслĕхсем çине-çине тĕл пулчĕç. Çакă пире эрех-сăра туяннă чух тимлĕ пулмалли пирки калать.

Кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕнĕ алкоголь рынокне йĕркелессипе çыхăннă çĕнĕ законодательство алкоголь продукцине сутнă чух çĕнĕ правилăсене çирĕплетрĕ. Çапла вара алкоголь сутас ĕçре регионсен чиккисен алăкĕсем уçăлчĕç. Çакă вара пахалăхсăр алкоголь продукцине çăмăллăнах магазин прилавокĕсем çине лекме май парать.

Чăннипех те, ку тĕлĕшпе лару-тăру çивĕч-и? Ку ыйту çине вара 2005 çулхи цифрăсем хурав парĕç: иртнĕ çул Чăваш Республикинче наркăмăшланнисенчен 49,1 процентĕ алкогольпе наркăмăшланнă. (2004 çулта – 50,8 процент).

Çакна палăртсах каламалла, алкоголь суррогачĕпе наркăмăшланакансен йышĕ палăрмаллах ӳсрĕ: 972-рен 1166 (ку вăл алкогольпе наркăмăшланнинчен 18,7 процентĕнчен 27,3 процента çити ӳсни пулать).

2005 çулта алкогольпе тата алкоголь суррогачĕпе наркăмăшланакансем 656 çитрĕç. (2004 çулта – 620 çын, 5,8 процент чухлĕ ӳсрĕ). Иртнĕ çул тĕрĕсленĕ 1303,4 декалитр алкоголь продукцийĕнчен 267,4 декалитрне (тĕрĕсленин 20,5 процентĕ) пăрахăçлама тивнĕ.

Алкоголь продукцине туянакансене пахалăхсăр продукци лекессинчен сыхлас тĕллевпе ЧР Министрсен Кабинечĕ "Чăваш Республикин территорийĕнче ваккăн сутмалли алкоголь продукцин пахалăхне тата хăрушсăрлăхне ирĕклĕн тĕрĕслесси çинчен" постановлени кăларчĕ. Асăннă документпа килĕшӳллĕн Чăваш Республикинчи алкоголь продукцине туса кăларакансемпе оптовиксем хăйсен ирĕкĕпе алкоголь продукцин пахалăхне тĕрĕслеме пултараççĕ. Вăл пахалăхлă пулсан, ятарлă наклейка илеççĕ – кĕленче мăйĕ çине çыпăçтараканни. Тавар туянаканăн çакна пĕлмелле: эрех кĕленчин мăйĕ çинче çакнашкал наклейка пулсан, эрех лабораторинче тĕрĕслев витĕр тухнă, унăн пахалăхĕ пирки иккĕленмелле мар. Наклейкăн хӳтĕлев степенĕ 7, çавăнпа та çакнашкал суя наклейкăсем хатĕрлеме май та çук.

"ПроСтОр" чикĕллĕ яваплăхлă общество (ирĕклĕ тĕрĕслев мероприятийĕсене ирттерекен ятарлă операторсем) пĕлтернĕ тăрăх, кăçалхи октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне курттăммăн сутакан 21 организацирен 15-шĕ эрех пахалăхне тата хăрушсăрлăхне ирĕккĕн тĕрĕслеме Чăваш Республикинчи 3 производительпе килĕшӳсем тунă: "Шупашкарти ликерпа водка завочĕн" "Росспиртпром" ФГУП филиалĕпе, "Марпосадский", "Ядринский" спирт завочĕсемпе.

Уйăх çурă хушшинче тĕрлĕ алкоголь продукцине пăрахăçланă:

– "Коньячная на миндале" пылак настойка, Раççейри "Родник и К" чикĕллĕ яваплăхлă обществăра хатĕрленĕ, Мускав облаçĕ, Мытищи хули;
– иçĕм çырлинчен хатĕрленĕ "Каберна" çурма пылак хĕрлĕ эрех, "Ставрополец" чикĕллĕ яваплăхлă обществăра хатĕрленĕ, Раççей;
– иçĕм çырлинчен хатĕрленĕ "Мускат Рубин" хăватлă хĕрлĕ десерт эрех, "Сьендайл уойнчьри" Ямбол хули, Болгари;
– иçĕм çырлинчен хатĕрленĕ "Кагор" ятарлă десерт хĕрлĕ эрех, "Вилаш" акционерсен хупă обществинче хатĕрленĕ, Раççей, Санкт–Петербург хули;
– иçĕм çырлинчен хатĕрленĕ ятарлă хăватлă "Мадера" шурă эрех, "Вилаш" акционерсен хупă обществинче хатĕрленĕ, Раççей, Санкт-Петербург хули;
– çурма пылак "Альпийский рубин" хĕрлĕ эрех, "Гермес-Ника" акционерлă хупă общество хатĕрленĕ, Раççей КБР, Нальчик хули.

**Э. СИМАКОВА,**
**район администрацийĕн экономика пайĕн ертӳçи.**
Тел. 2-13-41.

## Суту-илӳ ыйтăвĕсемпе

# Арендăна параççĕ

Ял ĕçченĕшĕн туса илнĕ продукцине йĕркеллĕ вырнаçтарасси – тĕп ыйтусенчен пĕри. Район администрацийĕн экономика пайĕ вара сире, акă, ку тĕлĕшпе мĕн çинчен пĕлтерет.

"Северная суту-илӳ компани" чикĕллĕ яваплăхлă общество суту-илӳ тата склад лаптăкĕсене арендăна парать. Палăртмалла, кунта пӳлĕмĕсем пысăк, уйрăм, паянхи кун ыйтакан оборудованисем вырнаçтарнă, çутă, хутса ăшăтаççĕ вĕсене. Хурал сигнализацийĕ те ĕçлет. Кăмăл пулсан, телефон та кĕртме пултаратăр. Урамра – çивитиллĕ картишĕнче суту-илӳ тума питĕ меллĕ: çумăр та, юр та чăрмантармасть.

Ял хуçалăх продукцине вырăнта туса илекенсене пахча çимĕç, аш-какай, сĕт, çăмарта сутма та вырăн параççĕ кунта. Кашни эрнерех çак пасарта "оптовик кунĕ" иртет, шăмат кунпа вырсарни кун вара таварсене сутмалли ярмăрккă пулать. Çăмăл тата тиев турттармалли автомашинăсенчен те сутаççĕ. Управ камерисем ĕçлеççĕ. Рынок территорийĕнче автомашинăсене тăратмалли ятарлă вырăн пур, кафе ĕçлет.

Пасар кашни кунах 8 сехетрен пуçласа 19 сехетчен ĕçлет.

Заявленисене çак адреспа йышăнаççĕ. Мускав проспекчĕ, 40 çурт, «Т. Кривов урамĕ» чарăну, тел. : 39-13-00, 39-13-02.

**Л. ПАВЛОВА.**

## Спорт

# Раççей турнирĕнче çĕнтерчĕç



Октябрĕн 26–30-мĕшĕсенче Саратов облаçĕнчи Вольск хулинче бокс кĕрешĕвĕпе мала тухассишĕн пĕтĕм Раççейри турнир иртрĕ. Унта Вольск, Пенза, Сызрань, Саратов хулисенчен тата Арменирен 60 спортсмен хутшăннă. Вĕсем хушшинче Чăваш Республикин виçĕ çамрăк боксерĕ те пулнă. Палăртма кăмăллă, виççĕшĕ те пирĕн районтан: Сергей Черкашин (57 килограмлă виçере), Егор Ярухин (32 кг), Стас Филиппов (38 кг).

Çакна каласа хăварар, асăннă боксерсене пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ спорт çулĕпе Сергей Васильевич Черкашин ертсе пырать, боксри вăрттăнлăхсене алла илме пулăшать, тĕрлĕ шайри ăмăртусене хутшăнтарать. Ăнăççăр та мар. Тренер та, спортсменсем те Вольскри турнира хутшăнма финанс пулăшăвĕ кӳнĕшĕн спорт шкулĕн директорне Ф.А. Рылина тав тăваççĕ.

Малалла тĕплĕнрех пирĕн спортсменсен турнирти ăмăртăвĕ пирки. С. Черкашин финалта Армени боксерĕпе тĕл пулнă. Унччен çурма финалти кĕрешĕве вăхăтченех вĕçлеме пултарнă Сергея эрменпе кĕрешме çăмăлах пулман. Çапах та вăйă вĕçленсен пухнă очкосене хушсан, вăл самай мала кайни курăннă – тивĕçлĕ çĕнтерӳ!

Егор та хăйĕн виçе категорийĕнче асăннă турнирта хăйĕнчен вăйлăраххи çуккине уçăмлă çирĕплетнĕ. Тунă çитĕнĕвĕпе вăл Муркашра аслăрах ăрури С. Черкашин, А. Никитин, А. Тимофеев, Е. Григорьев боксерсем вырăнне тивĕçлĕ смена килни çинчен каларĕ. Сăмах май, халĕ асăннă 4 боксер ноябрĕн 26-мĕшĕнче Шупашкарта Раççей Кубокĕ умĕн "Раççей çамрăклăхĕ" суйлав ăмăртăвне хутшăнĕç.

38 килограмлă виçе категорийĕнче кĕрешнĕ Стас та турнирта хăй пысăк шанăç кӳрекен боксер пулнине çирĕплетнĕ: вăл финалта Вольск хулин боксерне выляса ярса 2-мĕш вырăна тухни те çамрăк спортсменшăн пысăк çитĕнӳ!

# Калайкассисем малта

Шкул ачисен каникул кунĕсенче баскетболла выляссипе пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулсем хушшинче мала тухассишĕн ăмăртусем иртнĕ.

Ноябрĕн 7-8-мĕшĕсенче Муркашра ăмăртусем иртнĕ. Пĕрремĕш кун хĕрсем вăй виçнĕ. 14 команда хутшăннă ăмăртусене. Вĕсенчен чи пултарулли Калайкасси шкулĕн команди пулнă. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене Муркаш тата Оринин шкулĕсен командисем тивĕçнĕ.

Иккĕмĕш кунне яшсем кĕрешĕве тухнă. Кунта та 14 команда пулнă. Çĕнтерӳçĕсем вара каллех Калайкассисем пулса тăнă. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнтисем – Муркаш шкулĕпе Оринин шкулĕн командисем.

Призлă вырăн йышăннă командăсем дипломсене, ăмăртура палăрнă уйрăм выляканисем вара дипломсемпе хаклă парнесене тивĕçнĕ.

## Моргаушское ОСБ № 7034 СБ РФ
## таблица выигравших номеров пенсионных счетов

| № п-п | Размер выигрыша (руб) | Номер пенсионного счета | Наименование учреждения сбербанка |
|---|---|---|---|
| 1 | 200 | 42306810775140503548 | 7034/0010 |
| 2 | 200 | 42306810475140008479 | 7034/0000 |
| 3 | 200 | 42306810375140008126 | 7034/0000 |
| 4 | 200 | 42306810075140008468 | 7034/0000 |
| 5 | 200 | 42306810875140700500 | 7034/0012 |
| 6 | 200 | 42306810275141000896 | 7034/0019 |
| 7 | 200 | 42301810975140000325 | 7034/0000 |
| 8 | 200 | 42306810975140009046 | 7034/0000 |
| 9 | 200 | 42301810175140010940 | 7034/0000 |
| 10 | 200 | 42306810175140700488 | 7034/0012 |
| 11 | 200 | 42306810075140007100 | 7034/0000 |
| 12 | 200 | 42306810375140008252 | 7034/0000 |
| 13 | 200 | 42306810375140007541 | 7034/0000 |
| 14 | 200 | 42306810275140008611 | 7034/0000 |
| 15 | 200 | 42306810675140008062 | 7034/0000 |
| 16 | 200 | 42306810175140200519 | 7034/0002 |
| 17 | 200 | 42306810475140008453 | 7034/0000 |
| 18 | 200 | 42306810775140503179 | 7034/0010 |
| 19 | 200 | 42306810775140008836 | 7034/0000 |
| 20 | 200 | 42306810275140008585 | 7034/0000 |
| 21 | 300 | 42306810675140008114 | 7034/0000 |
| 22 | 300 | 42306810375140503799 | 7034/0010 |
| 23 | 300 | 42306810175140503193 | 7034/0010 |
| 24 | 300 | 42306810775140007099 | 7034/0000 |
| 25 | 300 | 42306810675140007186 | 7034/0000 |
| 26 | 300 | 42306810475140800761 | 7034/0013 |
| 27 | 300 | 42306810075140008219 | 7034/0000 |
| 28 | 300 | 42306810975141100326 | 7034/0020 |
| 29 | 300 | 42306810975141000905 | 7034/0019 |
| 30 | 300 | 42306810575140504006 | 7034/0010 |
| 31 | 300 | 42306810675140400479 | 7034/0007 |
| 32 | 300 | 42306810075140503251 | 7034/0010 |
| 33 | 300 | 42306810975140300839 | 7034/0006 |
| 34 | 300 | 42306810475140007700 | 7034/0000 |
| 35 | 300 | 42306810975140700497 | 7034/0012 |
| 36 | 300 | 42306810075140503798 | 7034/0010 |
| 37 | 300 | 42306810075140503594 | 7034/0010 |
| 38 | 300 | 42306810275140008226 | 7034/0000 |
| 39 | 300 | 42306810875140007889 | 7034/0000 |
| 40 | 300 | 42306810975140007297 | 7034/0000 |
| 41 | 500 | 42306810375140008508 | 7034/0000 |
| 42 | 500 | 42306810375140503896 | 7034/0010 |
| 43 | 500 | 42300810575140400472 | 7034/0007 |
| 44 | 500 | 42306810275140200529 | 7034/0002 |
| 45 | 500 | 42306810275140008404 | 7034/0000 |
| 46 | 500 | 42306810575140008489 | 7034/0000 |
| 47 | 500 | 42306810775140700448 | 7034/0012 |
| 48 | 500 | 42306810275140007104 | 7034/0000 |
| 49 | 500 | 42306810675141000771 | 7034/0019 |
| 50 | 500 | 42306810575140503971 | 7034/0010 |
| 51 | 500 | 42306810975141000918 | 7034/0019 |
| 52 | 500 | 42306810175141000776 | 7034/0019 |
| 53 | 500 | 42306810075140008824 | 7034/0000 |
| 54 | 500 | 42306810875140007384 | 7034/0000 |
| 55 | 500 | 42306810275140400413 | 7034/0007 |
| 56 | 500 | 42306810075140007977 | 7034/0000 |
| 57 | 500 | 42306810475140008220 | 7034/0000 |
| 58 | 500 | 42306810475140700489 | 7034/0012 |
| 59 | 500 | 42306810575140008104 | 7034/0000 |
| 60 | 500 | 42306810875140008587 | 7034/0000 |
| 61 | 500 | 42306810875140503273 | 7034/0010 |
| 62 | 500 | 42306810275140008268 | 7034/0000 |
| 63 | 500 | 42306810075140800750 | 7034/0013 |
| 64 | 500 | 42306810275140503488 | 7034/0010 |
| 65 | 500 | 42306810275140007544 | 7034/0000 |
| 66 | 500 | 42306810975140503720 | 7034/0010 |
| 67 | 500 | 42306810575140008162 | 7034/0000 |
| 68 | 500 | 42306810175140007796 | 7034/0000 |
| 69 | 500 | 42306810275140007421 | 7034/0000 |
| 70 | 500 | 42306810175140007741 | 7034/0000 |
| 71 | 1000 | 42306810275140007175 | 7034/0000 |
| 72 | 1000 | 42306810875140503969 | 7034/0010 |
| 73 | 1000 | 42306810975140008209 | 7034/0000 |
| 74 | 1000 | 42306810475140007108 | 7034/0000 |
| 75 | 1000 | 42306810375141100214 | 7034/0020 |


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Ноябрĕн 13-мĕшĕнче Муркашра автовокзал çуртĕнче Чиркӳ лавки уçăлчĕ. Кунта эсир турăшсем, чăн тĕн кĕнекисем, чиркӳ япалисем, виле пытармалли хатĕрсем туянма пултаратăр. Çавăн пекех кĕлĕ тума заказ пама тата священнике киле кĕлĕ тума чĕнме заказсем хăварма юрать.**

**Икĕ пӳлĕмлĕ хваттер е уйрăм çурт Муркаш ялĕнче туянатăп.**
**Тел.: 8-903-064-87-10, 8-927-843-24-10.**

**Куплю двух- или трехкомнатную квартиру в с. Моргауши.**
**Тел.: 8-903-063-07-57. 2-2.**

**ООО «Моргаушрайбыт» срочно требуются швеи. Заработная плата свыше 3000 рублей. Обращаться в администрацию по телефону: 2-18-40 или 2-15-44.**
**Мы всегда рады видеть Вас!**

**1992 çулта туса кăларнă ВАЗ-2109 çăмăл а/м сутатăп. Ыйтса пĕлмелли телефонĕ: 8-906-381-25-60. Çĕньял Муркаш.**

**Сĕт-çу заводне хирĕç вырнаçнă йышăну пунктĕнче ĕневыльăх тата сурăх-така тирĕсене хаклă хакпа йышăнаççĕ.**
**Тел.: 8-903-063-07-57. 2-2.**



**ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"**
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".

**Директор-главный редактор**
**А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3364.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 14.11.2006 г.
Заказ
Дежурный по номеру ИЛЛАРИОНОВА Р.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.